## АТӐЛ ÇИНЧЕН ХУНӐ ЮРӐ

Юррӑмӑр, хускал, ан татӑл,
Атӑл тӑрӑх кӗрлесем!
Хумханать юратнӑ Атӑл,
Хӳхӗм унӑн хӗррисем.

Пирӗн ӗмӗт халӗ аслӑ,
Ӗмӗт аслӑ сан пекех.
Пирӗн пурӑнӑç хаваслӑ
Пулӗ ӗмӗр-ӗмӗрех.

Шывупа пире чӳхерӗн
Сулхӑн каç та уçӑ ир.
Çавӑнпа кунта чиперрӗн
Паттӑр ӳсрӗмӗр эпир.

Витӗр куçлӑ пирӗн халӑх,
Чунӗ сан пекех таса.
Мухтанса юрлатпӑр халӗ
Сан шыву пек шавласа.

Хапсӑнса тӑшман ӑмсанчӗ.
Шыв сыпасшӑнччӗ санран.
Вут-кӑвар сапса хӑпарчӗ
Хир-хир урлӑ аякран.

Пирӗн халӑх кар çӗкленчӗ —
Тӗлӗнсе тӑр эс, тӗнче!
Атӑл учӗсем кӗçенчӗç
Одер шывӗ хӗрринче.

Юррӑмӑр, янра, ан татӑл,
Атӑл тӑрӑх кӗрлесем!
Пысӑк эсӗ, савнӑ Атӑл,
Чаплӑ санӑн çыннусем!

*1946*